## Библиографи:

**Изедеркина, Нина Борисовна**. "Кашни çемьен хăйĕн çĕпри..." : [Муркаш районĕнчи Исетеркĕ ялĕнче çуралса ӳснĕ Нина Борисовна Ильина (Изедеркина) сăвăçпа пурнăç çинчен калаçу] / Нина Борисовна Ильина // Çĕнтерӳ ялавĕ : Моргаушская районная газета. - 2009. - 27 июнь (№ 51). - С. 2. - (Пирĕн ентеш). – Пуçламăшĕ.

**Изедеркина, Нина Борисовна**. "Кашни çемьен хăйĕн çĕпри..." : [Муркаш районĕнчи Исетеркĕ ялĕнче çуралса ӳснĕ Нина Борисовна Ильина (Изедеркина) сăвăçпа пурнăç çинчен калаçу] / Нина Борисовна Ильина (Изедеркина) ; Альбина Юрату // Çĕнтерӳ ялавĕ : Моргаушская районная газета. - 2009. - 1 июль (№ 52). - С. 2. - (Пирĕн ентеш). - Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номĕрте.

**Кириллов, Г.** [Нина Изедеркина çинчен] / Г. Кириллов // Чăваш хĕрарăмĕ. – 2002. – 30 чӳк – 6 раштав (№ 47). – С. 5.

**Нина Изедеркина** // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 508.

**Нина Изедеркина** çитрĕ утмăла, утать малалла! // Самант. – 2009. – № 3. – С. 16.

**Чернова, А.** «Пур-и юрату?» / А. Чернова // Çĕнтерӳ ялавĕ. – 2002. – 4 авăн.

**Юрату, А. В.** Вăрттăн тĕнче / А. Юрату // Чăваш хĕрарăмĕ. – 2010. – 27 нарăс – 5 пуш (№ 7). – С. 10.

**Изедеркина Нина** // Союз чувашских писателей. – Чебоксары, 2002. – С. 42-43.



Адрес:

Чăваш Республики,

Муркаш районĕ,

Муркаш сали,

Хĕрлĕ тӳрем, 5.

Телефон

(8 83541) 62-6-36


Ĕç вăхăчĕ :

8:00—18:00

Шăмат кун 8:00— 17:00

Вырсарни кун—канмалли кун

**Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн «Централизациленĕ библиотека системи» муниципаллă бюджет культура учрежденийĕ**



# «Пурнăç тĕрри»

**Н. Б. Изедеркина артист, поэт-песенник, ЧР Писательсен союзĕн членĕ, Алексей Талвир ячĕллĕ преми лауреачĕ çуралнăранпа 70 çул çитнĕ май**



Муркаш сали
**2019**



**Нина Изедеркина** (Нина Борисовна Ильина) 1949 çулхи нарăсăн 15-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Исетеркке ялĕнче çуралнă. Пурнăç урапи ăна хăйĕн ĕмĕрĕнче таçта илсе çитернĕ. Çакна Нина Борисовна хăйĕн «Астумастăп» сăввинче лайăх çырса кăтартнă.



Вăрçă хыççăн çуралнăскерĕн ачалăхĕ çăмăл пулман. Пĕр хушă Нина Борисовнăн çемьи Чулхула облаçĕнче те пурăннă. Каярахпа Нина, 16 çул тултарсан, Оренбург облаçĕнчи Орск хулинчи Строительсен училищинчен штукатур-маляр пулса вĕренсе тухать. Тĕлĕнмелле вăл шăпа тени. Вăл пўрнинчен иртейместĕн. Тепĕр вицĕ уйăхран Нина çак хулари театр студине вĕренме кĕрет. Вĕреннĕ вăхăтрах театра парикмахера пулăшакан пулса ĕçлет. Вырăс спектаклĕсенче нумай вылять.



Нина Борисовна Ильина телевиденинче, наци театрĕнче тăрăшса ĕçлет. Кулăшпа сатира театрĕнче нумай рольсене пурнăçри пек витĕмлĕ сăнарласа, куракансене савăнтарать. Нина Борисовна театрсенче 30 çула яхăн ĕçлет. Куракансене нумай-нумай сăнарпа савăнтарнă вăл: Сăпани («Хусах Ваçça авланать», Н. Сидоров), Крахьян («Кин кĕртесси çăмăл мар» В. Петров), Майя («Кĕтмен хăнасем е «Жигули» йĕри-тавра», А. Чебанов), Света («Ар çынсенчен сыхланăр!», А. Курляндский) тата ытти те.

«Сăвă çырма мăшăр хавхалантарнипе пуçланчĕ» - аса илет хăйĕн кĕнекисенче Нина Борисовна.

Ĕçленĕ вăхăтра йывăр аманнине пула Нина Борисовна Ильинан ура çине тăриччен чылай вăхăт иртнĕ. Çак тапхăр ăна пурнăç пурнăç пĕлтерĕшĕ, унăн хакĕ çине пачах çĕнĕлле пăхма хистет.



1965-1967 çулсенче Оренбург облаçĕнчи А.С. Пушкин ячĕллĕ драма театрĕнче ĕçленĕ. Ун хыççăн 35 çул ытла — культура ĕçченĕ.



Нумай-нумай куракан асĕнчех халĕ те вăл выляннă кулăшла сăнарсем. Чи паллисем: Сăпани («Хусах Ваçça авланать». Н.Сидоров), Крахьян («Кин кĕртесси çăмăл мар», В.Петров), Майя («Кĕтмен хăнасем» е «Жигули» йĕри-тавра», А.Чебанов), Люçça («Арăмсем тăн кĕртрĕç», В.Петров), Света («Арçынсенчен сыхланăр!», А.Курляндский)…





Шупашкарта Нина Борисовна Вырăс драма театрĕнче (1973-1981), Чăваш телевидени студийĕнче (1981-1990) гример-постижер тата пĕр хушă Чăваш наци драма театрĕнче, унтан Чăваш кулăшпа сатира театрĕнче (1990- 2004) артистка пулса ĕçленĕ.



Нина Ильина - Республикăри паллă артистка пулсан, Нина Изедеркина - пурте пĕлекен юрăç-сăвăç. Чăваш эстрадинче янăракан чи паллă - «Пур-и юрату?», «Юрату ташши», «Шырамастăп çăлтăр тўпере», «Сивĕ мана, ăшăт», «Тĕл пулман пулсан», «Ан вăтан», «Эп вĕрентĕм халăхран», «Эпир иккĕн» ... юрăсен сăввисене çыраканĕ шăпах вăл. 1995 çултанпа ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ Сергей Павлов эстрада концерчĕсенче «Пур-и юрату?» юрă шăрантарать. 20 çул ытла ĕнтĕ!

«Пур-и юрату?» хыççăн Нина Борисовна сăввисемпе Сергей Павлов «Ан васка» (ăна Валентина Кузнецовапа пĕрле юрлать), «Атте сăмахĕ» (ăна хăйĕн хĕрĕпе - Маша Павловапа юрлать), «Ах, санпа», «Ах, хĕрача», «Сивĕ мана, ăшăт», «Тав сире, сиплекенсем!», «Шырамастăп çăлтăр тўпере» юрăсем хайлать.



2001 çулта Нина Борисовна Чăваш Республикин писательсен союзĕн членĕ пулса тăрать.

ЧР Писательсен союзĕн членĕ Алексей Талвир ячĕллĕ преми лауреачĕ. Унăн сăввисем тăрăх чылай юрă хывнă.



«Пурнăç - питĕ тĕлĕнтермĕш, - тет Нина Борисовна Изедеркина. - Çулсем иртнĕ май ыррине кăна куратăн, çавăнпа ырă кăна тăвас килет. Пурнăçа уйрăмах хаклама пĕлмелле. Туслăхата...»

Паллă литературовед тата критик Юрий Васильевич Яковлев хăйĕн пурнăçне театрпа, шўт-кулăпа, юрă-кĕвĕпе çыхăнтарнă ÇЫН пирки хакласа çапла каланă: «Хальхи вăхăтри ўнер тĕнчи чи кăткăс (спонтанлăх) хăйне тĕллĕн, хăй ирĕкĕпе пулакан ўнер. Таçтан хаосран çуралакан, хаосран килекен ўнер. Тĕслĕхрен, Алон Ритман 2014 çулта ўкернĕ киноне «Кăштах хаос» тесе ят панă. «Версальский роман» тесе куçарнă. Анатолий Тьяченко тата Вадим Демчок - театр реформаторĕсем çак ўнерле хавхапанаççĕ ĕнтĕ. Вăйă кунта - вăй, ВĂЙ! Нина Изедеркина пултарура хăйне мĕнле тытнинче эпĕ çак ВĂЯ туятăп. Юнона Морис, Людмила Петрушевская чăрсăрла ирĕклĕхĕ пурăнать унра».

**Библиографи (ĕçĕсем):**




**Изедеркина, Нина Борисовна.** Тĕл пулман пулсан : [сборник стихов на чувашском, русском, английском и немецком языках] / Н. Изедеркина. - Шупашкар : [б. и.], 2014. - 49 с.



**Изедеркина, Нина Борисовна.** Ўкнĕ хыççăн çўлерех вĕçетĕп [Текст] : сăвăсемпе юрăсем / Н. Б. Изедеркина ; . - Шупашкар : Всечувашский общественно -культурный центр, 2002. - 51 с.



**Изедеркина, Нина.** Ман вăрттăн тĕнче, эс те çав тĕнчере [Ноты] : чăваш эстрада юррисем / Нина Изедеркина. - Шупашкар : ИП Л. А. Наумова, 2010. - 80 с.



**Кудаков, Юрий Дмитриевич.** Пурнăç тĕрри [Текст] : автор юррисен пуххи. Сборник / Ю. Д. Кудаков , Н. Б. Изедеркина. - Чебоксары : ООО "Своя типография", 2016. - 59 с.